23-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
АВГУСТ
27
КĔÇНЕРНИКУН
200 (6135) №

Чăваш Коммуни

(Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!)

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Юлашки сехетре

Хĕвеланăç тата Калинин фрончĕсенче пирĕн войскăсем наступление куçнă та противникăн оборонине татса кĕнĕ. Нимĕç войскисене 40-50 километр хăваласа янă, пирĕн войскăсем илнĕ трофейăсем

Пĕр 15 кун каярах Хĕвеланăç тата Калинин фрончĕсенчи войскăсен пĕр пайĕ Ржев тата Гжатскпа Вязьма енĕсенче наступлени тума пуçланă.

Пирĕн войскăсем пырса çапнине пула наступленин малтанхи кунĕсенчех противникăн оборонине 115 километр хушши фронтра татса кĕнĕ. Наступление вăйлатса пырса тата противника татти-сыпписĕр пыра-пыра çапса, пирĕн войскăсем Германин 161, 342, 292, 129, 6, 256-мĕш пехотнăй дивизийĕсене, 14-мĕшпе 36-мĕш мотодивизийĕсене тата 2-мĕш танковăй дивизине çĕмĕрсе тăкнă, 1-мĕшпе 5-мĕш танковăй дивизисене, 328, 183 тата 78-мĕш пехотнăй дивизисене чылай пысăк поражени тÿстернĕ. Çÿлте асăннă енсенче нимĕç войскисен фронтне 40—50 километр хушши каялла сирсе ывăтнă.

Августăн 20-мĕшне çити вăхăтра пирĕн войскăсем халăх пурăнакан 610 пункта, вăл шутра Зубцов, Карманово, Погорелое-Городище хулисене ирĕке кăларнă.

Çÿлте асăннă операцисенче, туллимар даннăйсем тăрăх, пирĕн войскăсем çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: танксем—250, орудисем—757, минометсем—567, пулеметсем—1.615, противотанковăй пăшалсемпе автоматсем—929, винтовкăсем—11.100, минăсем—17.090, пăшал патронĕсем—2.311.750, снарядсем—32.473, рацисем—65, автомашинăсем—2.020, мотоциклсем — 952, велосипедсем — 1.969, тракторсем—52, кухньăсем—37, лавсем—340, боеприпассен, тумтирсен тата ытти япаласен склачĕсем—75.

Кунсăр пуçне, çĕр çинчи войскăсемпе авиаци пĕтерсе тăкнă: танксем—324, орудисем—343, минометсем—140, пулеметсем—348, автомашинăсем—2.040, лавсем—690.

Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллерирен персе 252 самолет ÿкернĕ, аэродромсенче 290 самолета пĕтерсе тăкнă тата сиенленĕ.

Нимĕçсен вĕлернĕ салтакĕсемпе офицерĕсен хисепĕ 45 пин çынна çитет.

Нимĕçсен фашистла дивизийĕсен вăйне хавшатса пырса, вĕсен çапăçу техникине пĕтере-пĕтере тăкса тата чылай пысăк пайне тытса илсе, пирĕн войскăсем малалла та хаяр çапăçусем туса пыраççĕ. Çапăçусем РЖЕВ хулин хĕррисенче пулса пыраççĕ.

Çапăçусенче ЛЕЛЮШЕНКО, ФЕДЮНИНСКИЙ, ХОЗИН, ПОЛЕНОВ, РЕЙТЕР, ШВЕЦОВ генералсен войскисем уйрăмах палăрнă.

Нимĕçсен фронтне татса кĕрессине арми генералĕ ЖУКОВ тата генерал-полковник КОНЕВ организациленĕ.

СОВИНФОРМБЮРО.

Мухтав геройсене!

Ĕмĕр-ĕмĕрех асра юлĕç эпир пурăнакан кунсем, çулсем. Ĕмĕр-ĕмĕрех асăнĕç Сталин ертсе пыракан пирĕн ÿрăва, унăн паттăр та чыслă кунçулне. Пинпин çулсем иртĕç, этемлĕх тĕрлĕ кĕрешÿсемпе тăвăлсем витĕр тухĕ, унăн историйĕ хĕрушă кунсене те, савăнăçлă кунсене те пурăнса иртерĕ, анчах пур-пĕрех эпир пурăнакан кунсем тĕнче историйĕн, этемлĕх историйĕн чи чаплă та чи çутă страницисем пулса юлĕç. Паянхи пек ответлă, çавăнпа пĕрлех тата паянхи пек мухтавлă тапхăрсем пирĕн халăх историйĕнче, пĕтĕм прогрессивлă этемлĕх историйĕнче урăх пулман, тен пулмĕç те.

Вунтăватă уйăх ытла ĕнтĕ совет халăхĕ чи тискер тăшмана хирĕç отечественнăй вăрçă туса пырать. Çак тăшман вăл — фашизм, çак тăшман вăл — пирĕн çĕршыва çĕлен пек килсе кĕнĕ нимĕç. Вăл пирĕн кунçула, пирĕн историе, пирĕн ирĕклĕхе, пирĕн халăха пĕтерсе тăкасшăн. Вăл пирĕн пуласлăха, пирĕн пурнăçа сурса сÿнтересшĕн. Сахал мар тăшмансем пулнă пирĕн çĕршывăн, сахал мар хĕрушă кунсем пурăнса иртернĕ пирĕн халăх, анчах фашизм пек тискер тăшман унăн нихăçан та пулман, паянхи пек хĕрушă кунсем вăл нихăçан та пурăнса иртерменг тен вĕсем урăх пулмĕç те.

Çулталăк та икĕ уйăх! Калама çăмăл. Анчах çак вăхăт хушшинче чылай асаплăх, чылай хĕнхур курчĕ пирĕн халăх. Пиншер совет çыннисен пурнăçĕ вăхăтсăр татăлчĕ. Пирĕн халăхăн пĕр пайĕ вăхăтлăха нимĕç баронĕсен пусмăрĕ айне кĕрсе ÿкрĕ. Пирĕн çĕршыв çинче хура пĕлĕтсем халланчĕç. Пирĕн çĕршыв çинче çăхансем явăнаççĕ. Пирĕн айăпсăр ачасене çăтса яма хапсăнаççĕ. Çав çăхансем—нимĕçсем. Пирĕн паянхи асаплăхшăн, пулас йывăрлăхсемшĕн, пирĕн ачасемпе арăмсен кунçулне татнăшăн, — çаксемшĕн пуриншĕн те нимĕç айăплă, пуриншĕн те фашист ответ тытма тивĕçлĕ! Вăл çапла пулать те. Фашист текен тискер чĕрчунсен вĕтĕвне пирĕн халăх тата унăн кĕрешÿри тусĕсем часах çĕр пичĕ çинчен шăлса ывăтĕç. Вăл ирсĕр чĕрчунсене истори часах этемлĕх кайăкĕсен масарĕ çинчи хура юпа çумне пăталаса лартĕ. Нимĕç фашизмĕн ячĕ те юлмĕ, унăн кĕлне те çил вĕçтерсе кайĕ. Вăл кун инçе мар.

Анчах çак куна çывхартас тесен, пирĕн кашнийĕн харпăрхăй вырăнĕнче пĕтĕм чуна, пĕтĕм пурнăça парса кĕрешес пулать. Пирĕн пурнăç халĕ — кĕрешÿре, çĕнтерÿре пулмалла. Кам çак кĕрешĕве хутшăнмасть, кам паянхи кĕрешÿрен пăрăнать, вăл пирĕнне мар, вăл — тăрăнсăр, вăл тăшмана пулăшать. Çакăн пек ларма ыйтăва кунçул.

Урса кайнă тăшмана хирĕç совет халăхĕ нихăçан пулман паттăрлăх кăтартса кĕрешет. Нимĕç командованийĕн планĕсем пĕрре кăна мар арканса кайрĕç, нимĕç войскисене пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар пĕрре кăна мар арканса халăхлăх пыра-пыра çапрĕ. Пĕтĕм совет çĕршывĕнче пĕрле çак хаяр кĕрешÿре чăвашсен халăхĕн ывăлĕсем те паттăррăн çапăçаççĕ.

Паян эпир хамăрăн земляк çинчен, Совет Союзĕн Геройĕн ятне илме тивĕçлĕ пулнă Федот Никитич Орлов çинчен калăпăр, пичетлесе кăларатпăр, [illegible] хирĕç пыракан

кĕрешÿре паттăрлăх, хăюлăх кăтартнăшăн Совет Правительстви ăна пысăк награда — Ленин орденĕ тата «Золотая Звезда» медаль парса, Совет Союз Геройĕн званине панă. Кунсăр пуçне, Орлов юлташ Хĕрлĕ ялав орденĕпе Хĕрлĕ Çăлтăр орденне илнĕ. Чăваш халăхĕн ывăлĕсем Орлов пек паттăррăн кĕрешнине пĕлме кăмăллă та савăнăçлă! Мухтав та чыс вĕсене!

Пирĕн хаçатсенче нумаях та пулмасть чăваш халăхĕн тепĕр чаплă ывăлĕ çинчен — Совет Союзĕн Геройĕ Ефимов çинчен çырса пĕлтернĕччĕ. Мухтавлă землянсен йышĕ пысăк. Вĕсем çĕршерĕн шутланаççĕ. Вĕсен малти речĕсенче летчик-майор Риков, политрук Прокопьев, летчик-старши лейтенант Маренин, рота писарĕ Петров, радист-стрелок Павлов, старши политрук Осипов, летчик-старши лейтенант Игнатьев тата ыттисем те тăраççĕ. Вĕсене Совет правительстви орденсем парса наградăланă. Вĕсем кашниех харпăрхăй вырăнĕнче пĕр шиксĕр, пурнăçа шеллемесĕр кĕрешнĕ, нимĕç захватчикĕсене сахал мар пĕтерешĕтере тăкнă.

Акă камсенчен вĕренмелле пирĕн тăшмана хирĕç кĕрешме! Акă камсем пек хÿтĕлемелле пирĕн хамăрăн юратнă тăван çĕршыва!

Çакăнпа пĕрлех пирĕн тылра та мухтава тивĕçлĕ ĕçлесе правительство наградине илнĕ геройсем сахал мар. Чугунçул çинчи стахановецсен Макаров, Николаев, Богомазов тата ытти юлташсен ĕçне тивĕçлипе хакланă, вĕсем нумаях та пулмасть орденсемпе медальсем илчĕç. Тылра мĕнле ĕçлемеллин примерне Оборонăн Государственный Комитечĕн Хĕрлĕ ялавне илнĕ Н-ски завод уйрăмăнах лайăх кăтартса парать. Çавăн пекех ялхуçалăхĕнче те вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек ĕçлесе лайăх пример кăтартакан юлташсемпе коллективсем нумай. Вĕсем пурте отечественнăй вăрçă геройĕсем. Пĕрисем тылра, теприсем фронтра геройлăх кăтартса нимĕç бандичĕсене хирĕç кĕрешеççĕ. Акă камсенчен вĕренмелле пирĕн çĕнтерÿ çывçăн çĕнтерÿ туса пыма!

Фашистла захватчиксем халĕ тăван çĕршывăн пиптех те кирлĕ центрĕсем, районĕсем патнелле талпăнаççĕ. Вĕсем пирĕн Кавказа, Кубане тытса илесшĕн. Вĕсем Атăл çине тухма хапсăнаççĕ. Тăшман каллех пирĕн умма пысăк хăрушлăх кăларса тăратрĕ. Вăл кайĕн вилĕмĕ çывхарса килнине туять, çавăнпа юлашки вăйĕсене çапăçăва кĕртсе ярса çитĕнÿсем тума тăрăшать. Пирĕн ăна тытса чармалла, унăн чĕрĕ вăйĕпе техникине пĕтерсе тăкса каялла хăваласа ямалла, çĕмĕрсе тăкмалла. Çак задачăна эпир хамăрăн паттăр землякесем пек кĕрешсен кăна пурнăçа кĕртме пултаратпăр.

Халĕ пирĕн колхозсен уйхирĕсенче тырпулсене пухса кĕрес хĕрÿллĕ вăхăт пырать. Тулăх ÿснĕ тырпула ăнăçлăн пухса кĕртни фашистла çĕленкалтасене хăвăртрах çапса çĕмĕрме пулăшать. Çакна асра тытса, кашни колхозникпе колхозницăн уйхирне, итем çинче, государствăна тырă пана çĕрте хăйĕн пурнăçне шеллемесĕр ĕçлес пулать, тырпула вăхăтра тата пĕр тăкаламасăр пухса кĕртесси шăн тăрăшас пулать. Çакăн пек тума ыйтаççĕ пирĕнтен фронтри тăвансем, пирĕн хисеплĕ землякесем.

Тăккаланчăка хирĕç кĕрешме шкул ачисене мобилизацилемен

КАНАШ, августăн 26-мĕш. (Телефонпа). Кивĕ Ахпÿртри пуçламĕш шкулта вĕренекенсенчен тăккаланчăка хирĕç кĕрешме 2 отряд организациленĕ. Вĕсем уборка пуçланнăранпа 50 гектар çинчи пучахсене пухса илнĕ. Çавăн пекех Йăлмаччари пуçламĕш шкулта вĕренекенсем те «Первое мая» колхоз хирĕнче кулленех 2-шер центнер пучах пухаççĕ. Кунти шкул ачисен отрядне шкул заведующийĕ Волков юлташ хăй ертсе пырать.

Анчах районри комсомол, пионер организацисем тата шкулти организацисем чылайĕшĕ вăрçă вăхăтĕнче пысăк вырăн йышăнса тăракан çак ĕçе халĕ те тивĕçлипе хутшăнман-ха. Ачча, Кармами тата ытти хăшпĕр ялсоветсенчи колхозсенче пучах пухас ĕçе шкул ачисем пачах хутшăнмаççĕ. Ачча ялсоветĕнчи «Хĕрлĕ Çар» Куйбышев ячĕпе тăракан колхозсен ыраш вырнă кашни тăваткăл метр çинчех 10—12 пучах тăкăнса юлнă. Аччари туллимар вăтам шкулăн директорĕ Е. Андреев, Çĕнĕ Аччари пуçламĕш шкулăн заведующийĕ Борметин юлташсем шкул ачисене пучахсем пухас ĕçе организацилемен.

Шкул ачисем тăккаланчăка хирĕç кĕрешме хутшăнни çинчен ыйтсан, райçутĕç пайĕн заведующийĕ Иванов юлташ нимĕн калама та аптăрать.

— Районĕпе кĕçĕн классенче вĕренекенсем 2.900, учительсем 200...—тет вăл.

— Вĕсем чăнах та çавăн чухлех пулĕ, анчах тăккаланчăка хирĕç кĕрешес ĕçе вĕренекенсемпе учительсем миçе çын хутшăннă?

— Калама пултараймастăп,—тет Иванов юлташ, — Ыран-паян ВЛКСМ райкомĕн секретарĕпе Павлова юлташпа пĕрле пионерсемпе шкул ачисем уйхирте мĕнле ĕçлени çинчен отчет çырма ларатпăр, çавăн чухне паллă пулать...

Пĕр сăмахпа каласан, райçутĕç пайĕ те, ВЛКСМ райкомĕ те пионерсемпе шкул ачисене тăккаланчăка хирĕç кĕрешме мобилизацилес тĕлĕшпе нимех те туман-ха. Ку ĕç хăй тĕллĕн пулса пырасса шанса пурăнаççĕ.

Ф. МАЛЫШКИН.

Малта пыракан колхозра

ШĂХАСАН, августăн 26-мĕш. (Телефонпа, хамăр корр.). Атнашри Киров ячĕпе тăракан колхоз паянхи куна 242 гектар çинчи çуртыррисене вырса кĕчĕ, 45 гектар çинчи кĕлтесене кÿрсе капана хыврĕ.

Уборка ĕçĕсенче пĕрремĕш бригада малта пырать. Вăл çурхи тырăсене вырас, кĕрхи тырăсене акас ĕçсене вĕçлерĕ, 17 гектар çинчи тырра çапса амбарсене кĕртрĕ.

Колхоз кĕрхи тырăсене акса пĕтерчĕ. Кĕракинче 1-мĕш, 3-мĕш тата 7-мĕш бригадăсем паха тĕслĕхсем кăтартрĕç.

Уборкăри хĕрÿ ĕç пултаруллă колхозниксене палăртрĕ. Çураки вăхăтĕнче колхозра стахановла ĕçлекенсем 24 çын пулнă, халĕ вĕсен шучĕ 52 çынна çитрĕ. 7-мĕш бригадăри И. Павлов кĕрхи тырăсене алăпа акрĕ. Вăл нормăпа 2,5 гектар акас вырăнне яланах 4—5 гектар акса пычĕ. Çавăн пекех 4-мĕш бригадăри Тимофеев, 1-мĕш бригадăри И. Григорьев юлташсем те алăпа акса ĕç нормине 175—200 процент тултарчĕç.

М. Тимофеева, С. Денисова, Е. Шурукова, П. Егорова колхозницăсем çурхи тырăсене çурлапа вырнă çĕрте икшер норма тултараççĕ.

Колхоз ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлесе пырса государствăна тырă, пахча-çимĕç парать. Çак кунсенче вăл 95 центнер купăста, 20 центнер кишĕр парса, 1942 çулти обязательствăна пĕтĕмпех тултарчĕ. Кунсăр пуçне государствăна 117 центнер çĕрулми, 228 центнер тырă пачĕ.

С. ШАДИН.

Комсомолецсем хĕрлĕ обозсем организацилеççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Районри колхозсем нумайĕшĕ государство умĕнчи парăмсене вăхăтра парса татма тăрăшаççĕ. Ку ĕçе комсомолецсемпе çамрăксем организацилесе пыраççĕ.

«Янмурзино» колхозри комсомолецсемпе çамрăксем (комсомолăн пуçламĕш организацин секретарĕ Ильин юлташ) государствăна тырă парас ĕçе лайăх организациленĕ. Комсомолецсем пуçарнипе августăн 20-мĕшĕнче кунта хĕрлĕ обоз организациленĕ, государствăна 55 центнер ыраш леçсе панă. Кунсăр пуçне, Хĕрлĕ Çар фондне 16 центнер ыраш хывнă. Колхоз государствăна ыраш парса татнă.

«Красное Сормово» колхозри комсомолецсем те хĕрлĕ обоз организацилесе, хатĕрлев пунктне 51 центнер ыраш кайса пачĕç.

«12 лет Октября» тата «Родина» колхозсем государствăна тырă тăратмалли обязательствăсене срокчченех пурнăçлама тăрăшаççĕ. Çак кунсенче «12 лет Октября» колхоз 20 лавлă хĕрлĕ обозпа 99 центнер, «Родина» колхоз 21 лавпа 63 центнер тырă государствăна леçсе пачĕç. «Родина» колхозра хĕрлĕ обоз организациленĕ çĕрте пĕррремĕш бригадăн бригадирĕ Татьяна Иванова тăрăшса ĕçлерĕ.

Анчах та комсомолăн хăшпĕр организацийĕсем государствăна тырă парса татас ĕçе организацилессипе ĕçлемеççĕ-ха. Чапаев ячĕпе тăракан колхозри комсомолецсем (секретарĕ Кольцова юлташ) ку енĕпе нимĕн те тумаççĕ. Ку колхоз государствăна пĕр пĕрчĕ те тырă паман. Тулă вырнă çĕрте кашни тăваткăл метрта 25 пучах выртса юлать пулсан та, тырă тăкăнса юлнине хирĕç кĕрешме кунта комсомолецсемпе çамрăксене организацилемен.

Молотов ячĕпе тăракан колхозра лаша хатĕрĕсене çĕтерсе пĕтернĕ пирки тырă тăратас ĕçе вăхăтра тумаççĕ. Кунта хăмăт, ĕнерчĕк кирлĕ пулсан, пĕр кун шăпах шырамалла.

Калас пулать, ВЛКСМ райкомĕ тата унăн секретарĕ Миронова юлташ государствăна тырă парас ĕçе комсомолецсене хутшăнтарассипе çителĕксĕр ĕçлеççĕ.

А. АЛЕКСЕЕВ.

Шкул ачисем колхоз производствинче

КАЛИНИНО. Анат Карачурари «Путь социализма» колхозра пионерсемпе шкул ачисем уйхирте тăрăшса ĕçлеççĕ. Галина Макарова, Ксения Игнатьева, Анфиса Михайлова, Васса Владимирова, Тимофей Степанов т. ыт. ачасем те жнейкăпа вырнă çĕлле алăпа çыхса, кулленхи нормăна 115 проц. тултараççĕ.

Пионерсем лашасем пăхас ĕçре те аван ĕçлеççĕ. А. Шорников, Ил. Филиппов, П. Михайлов пионерсем çуллахи каникул пуçлансанах лашасем пăхма тытăнчĕç. Вĕсем пăхакан лашасем мăнтăр тата таса. Ахальтен мар ĕнтĕ, колхоз правленийĕ жнейкăсене кÿлмелли лашасене лайăх пăхнăшăн вĕсене ĕç кунĕсем хушса панă. Пионерсем çак кунсенче М. Калинин юлташăн çырăвне колхозниксене вуласа пачĕç. Çавнашкалах вĕсем кулленех Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене колхозниксене вуласа кăтартаççĕ.

Б. ШОРНИКОВ.

Пахалăх инспекторĕ

ИШЛЕИ, августăн 26-мĕш. (Телефонпа). Тырпула вырса пуçтарнă çĕрте тăккаланчăка хирĕç кĕрешес тата ялхуçалăх ĕçĕсен пахалăхне тăтăшах сăнаса тăрас тĕлĕшпе Мамăш ялсоветĕнчи «17-мĕш партсъезд» колхозра пахалăх инспекторĕсем уйăрнă. Вĕсенчен уйрăмах 64 çулти Н. Федоров юлташ лайăх ĕçлет. Вăл тырпулсене мĕнле вырса пуçтарнине тимлĕн тĕрĕслесе тăчĕ. Çавăнпа колхоз кĕрхипе çурхи тырăсене вырнă чухне тăкак тумарĕ.

Трактор бригади çулталăк планне тултарчĕ

ÇĔМĔРЛЕ, августăн 25-мĕш. (Хамăр корр.). Машинно-тракторнăй станци 7-мĕш трактор бригади (бригадирĕ Федоров юлташ) ĕнер тракторпа тумалли ĕçсен çулталăкри планне тултарчĕ. Бригадăн, çемçе суха çине куçарса, планпа 1.400 гектар çинчи ĕçе тумалла пулнă, вăл 1.420 гектар çинчи ĕçе пурнăçларĕ. Бригадăра 3 трактор ĕçлет. Оськинпа Тарасов трактористсен ĕçне уйрăмăнах палăртмалла. Оськинăн планпа 323 гектар çинчи ĕçе тумалла пулнă, вăл 517 гектар çинчи ĕçе пурнăçланă.

Çуртыррисене вырас ĕçе вĕçленĕ

СОВЕТСКОЕ, августăн 25-мĕш. (Телефонпа). Районăн пучахлă тырăсене 15.163 гектар çинчен пухса кĕртмелле. Августăн 23-мĕш тĕлне 12.750 гектар çинчи тырăсене вырнă. Çуртыррисене вырас ĕçе 13 колхоз вĕçленĕ.

«Новый быт», «Новый путь», «Сеятель», Молотов ячĕпе тăракан колхозсем халĕ хĕрсех кĕлтесене кÿрсе капана хываççĕ.

Ф. НОВИКОВ,
Райçĕрăç пайĕн заведующийĕ.

Пирĕн мухтавлă земляк

Совет Союзĕн Геройĕ капитан Орлов

Юлташĕсем Федот Орловран:

— Эсĕ самолет çинче çуралнă-и мĕн? — тесе ыйтнă.

— Эпĕ ача чух сăпкара вĕçнĕ...

Летчиксем пушă вăхăтра час-часах шÿт тунă. Орлов та вĕсенчен юлман. Вăл вĕçме аван пĕлнĕ. Юлташĕсемпе çапăçури эпизодсене аса илнĕ.

Старт умĕн Орлов хумханса, машина патĕнчен машина патне чупнă. Çÿлелле пăхнă та каланă:

— Ну, соколсем, вĕçсе пăхар-ха! Лашасене тăрантарнă, çул çинче йывăр пуласси нчен хăрамаллах мар.

Пĕррехинче, тăшман батарейине атакăлама задани илсен, Орлов çапла пĕлтернĕ:

— Халĕ вăл батарея çук ĕнтĕ...

Пурте тĕлĕннĕ. Тепĕр çур сехет иртсен, вăл тăшман батарейине аркатса пĕтерсе тăкнă.

Орловшăн кашни вĕçев интереслĕ пек туйăнса пынă. Кашниччех çĕнĕ хумханусем, çĕнĕ япаласем тупăннă. Унăн экипажĕ 120 вĕçевре пулнă. Тăшман çине çĕршер тонна бомба тăкса нумай танксене, çар объекчĕсене пĕтернĕ.

Летчиксем унпа вĕçеве хавассăн кайнă. Экипаж мĕнле çÿллĕшре вĕçмеллине, бомбăсене мĕнле пăрахмаллине аван пĕлнĕ. Çавна пула вĕсем черетлĕ вĕçевсенчен аэродром çине сывă таврăнма пултарнă.

Орлов ача чухнехи пурнăçĕ çинчен асăнма юратмасть. Ача чухне вăл пиччĕшĕпе пĕрле кĕтÿ кĕтнĕ. Анчах паянхи пекех аса илет вăл иртнине: Уншăн хури-шурри пулнă, ларса макăрма та лекнĕ.

...Акă сип-симĕс улăх. Çÿлтен пĕчĕк ача пек кулса çутатакан ылттăн хĕвел Федотăн пит-куçне саратса лартнă. Вăл хулпуççи урлă вăрăм пушă çакса, чăтăмлăн, патваррăн утнă. Ăна пиччĕшĕ юратнă. Вăл та ăна юратнă. Яланах килĕштерсе пурăннă. Пиччĕшĕ халлап-юмахсем каласа панă.

Çапла вĕсем каç тунă. Çÿлте курак е кăвакарчăн вĕçнĕ. Вĕсем ăна курăнми пулаччен пăхса ăсатнă.

— Егор, ман вĕçес килет, — тенĕ Федот.

Халĕ, ÿссе çитсен, Орловшăн çак япаласем кулăшла пек туйăнаççĕ, анчах та унăн ĕмĕчĕ пурнăçа кĕчĕ. Вăл тăван çĕршывăн сталинла соколĕ пулса тÿпере вĕçет.

Федот Орлов 1931 çулта летчиксем хатĕрлекен шкула кĕнĕ. Унтан вĕренсе тухсан действительнăй çар службине каять. Тăван çĕршыв çине тапăннă тăшмансене хирĕç унăн пĕрре кăна мар çапăçма лекнĕ. Вăл самурайсене, белофинсене хирĕç çапăçнă. Çапăçура тăшманăн темиçе самолетне пĕтерсе тăкнă.

Орлов 1933 çултанпа вĕçет. Уншăн сывлăш типĕ çĕр пекех туйăнать. 1941 çулти июнĕн 22-мĕшĕнчен тытăнса, урăхла каласан, Германин фашистла захватчикĕсем Совет Союзĕ çине вăрçăпа ултавлăн тапăннă кунран пуçласа, вăл нимĕç пирачĕсене хирĕç паттăррăн çапăçать. Уншăн хаяр çил-тăвăл та, çумăрлă-юрлă çанталăк та нимĕн те мар. Вăл вутра та çунмасть, шывра та путмасть. Ăна тăван амăшĕ çирĕп чĕре, çивчĕ куç панă, ăна тăван çĕршыв вĕрентсе ÿстернĕ, çунатлантарнă. Халĕ вăл пирĕн пурнăça, тăвансене хÿтĕлет. Малашнехи пурнăçшăн çапăçать.

Федот Орлов — сывлăш карапĕн капитанĕ. Вăл Мăн Пакăш ялсоветне кĕрекен Кĕçĕн Ямашра (Советски р.) çуралнă.

Правительство Орловăн ĕçне тивĕçлипе хакларĕ. Захватчиксене хирĕç пыракан кĕрешÿ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăça кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре паттăрлăхпа геройлăх кăтартнăшăн Федот Никитич Орлова ХĔРЛĔ ЯЛАВ тата ХĔРЛĔ ÇĂЛТĂР орденĕсене панă. СССР Верховный Совет Президиумĕ кăçалхи июлĕн 21-мĕшĕнче йышăннă Указ тăрăх ăна ЛЕНИН ОРДЕНĔПЕ «ЗОЛОТАЯ ЗВЕЗДА» медальне парса СОВЕТ СОЮЗ ГЕРОЙĔН званине панă.

Мухтав чăваш халăхĕн паттăр ывăлне!

Нимĕçсен контратакисене сирсе пăрахнă

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, августăн 24-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Темиçе кун каярах вăйлă çапăçусем пулнă хыççăн противник тактика енĕпе паха вырăн йышăнса тăракан пункта çухатрĕ. Халĕ çак пункт тавра хаяр çапăçусем пуçланса кайрĕç. Вăл пункта тепĕр хут тытса илес тесе нимĕçсем пĕтĕм вăя хураççĕ, нимĕнле çухатусем умĕнче те чарăнса тăмаççĕ, пирĕн войскăсене вĕçĕ-хĕррисĕр атакăлаççĕ. Çапăçусем пынă вырăна нимĕçсен командованийĕ çĕнĕрен те çĕнĕрен подкреплениссем илсе пырать, хăйĕн оборонин ытти участокĕсене вăйсăрлатать. Çакăнна усă курса, пĕр вăйсăр вырăнта пирĕн часть наступлени тунă та противника лайăх позицирен хĕссе кăларнă.

Эпир çак кунсенче йышăнса илнĕ ял патне пымалли вырăнсенче нумай гитлеровецсене пĕтерсе тăкнă. Н-ски часăн боецĕсем çине фашистсен 6 танкĕ тапăнса пынă. Германи машинисем яла кĕрсе кайнă. Тăшманăн пехотине танксенчен уйăрса илнĕ те пĕтĕмĕшпе пекех пĕтерсе тăкнă. Артиллеристсем фашистсен машинисем çине тĕл пеме тытăннă. Пехотинецсем вăл машинăсене çывăха пыма парса горючи тултарнă бутылкăсем пăрахнă. 6 танка пурне те пĕтерсе тăкнă.

Пĕрмаях контратакăсем туса, гитлеровецсем пысăк çухатусем тÿсеççĕ. Паян ирхине тăшманăн икĕ хаяр атакине сирсе янă. Кăнтăрла та, çĕрле те траншейăсенче вăйлă çапăçу пырать. Пĕр вырăнта нимĕçсем высотана йышăнса илме пултарнă, анчах вĕсем малалла куçма хăтланнисем ăнăçсăр пулнă.

Совет Информаци Бюровěнчен

Августăн 25-мěшěнчи каçхи пěлтерÿ

Августăн 25-мěшěнче пирěн войскăсем противника хирěç **Клетская** районěнче, **Сталинградран** çурçĕр-хěвеланăçнерехре, **Котельниковăран** çурçĕр-хěвелтухăçнерехре, çавăн пекех тата **Прохладный** районěпе **Краснодартан** кăнтăртарахри вырăнта çапăçнă.

Фронтăн ытти участокěсенче паллă улшăнусемех пулман.

Хура тинěсре пирěн карапсем нимěçсен 5.000 тонна водоизмещениллě транспортне путарнă.

* * *

Августăн 24-мěшěнче пирěн авиаци чаçěсем фронтăн тěрлě участокěсенче нимěçсен 10 танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 50 автомашинине, боеприпассем тиенě 30 лавне, горючи тултарнă 5 автоцистернине пěтерсе тăкнă е сиенленě, полевой тата зенитнăй артиллерин 10 батарейине пусарса лартнă, боеприпассен 4 складне сирпěнтерсе янă, противникăн пехотине пěр батальона çити сапаласа янă, пěр пайне пěтерсе тăкнă.

Клетская районěнче пирěн чаçсем активлăн çапăçнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хěвеланăçнерехре пирěн войскăсем Дон шывěн сулахай çыранне каçнă противникăн танкěсемпе пехотин пысăк вăйěсене хирěç вăйлăн çапăçнă. Çав участокра лару-тăру кăткăсланнă. Пирěн боецсем нимěçсен атакисене хăйсен пурнăçне шеллемесěр сире-сире яраççě, противника питě пысăк çухатусем тÿстереççě. Н-ски часть, противникăн наступленине чарса тăрса, нимěçсен 17 танкне тата 450 гитлеровеца пěтерсе тăкнă. Пирěн танкистсем нимěçсене хирěç кунěн-çěрěн контратака тăваççě. Пěр подразделени пěр талăк хушшинче противникăн йышлăрах вăйěсене хирěç 7 хутчен контратака тунă, нимěçсен 22 танкне, хăй тěллěн çÿрекен 3 орудине, 9 противотанковăй орудине, 34 автомашинине пěтерсе тăкнă тата нимěç салтакěсемпе офицерěсене 600 çынтан кая мар вěлерсе пěтернě.

Пирěн авиаци Сталинград патне пыракан вырăнсенче тата пирěн зенитлă артиллери икě кун хушшинче нимěçсен 92 самолетне пěтерсе тăкнă.

* * *

Котельниковăран çурçĕр-хěвелтухăçнерехри районра пирěн войскăсем противникăн танкěсемпе мотопехотине хирěç çапăçнă. Н-ски чаçăн участокěнче нимěçсем темиçе хут атакăланă. Пирěн боецсем противникăн атакисене сирсе янă. Орудисемпе противотанкăлла пăшалсене персе, гранатăсем тата çунакан шывпа тултарнă бутылкăсем ывăтса, нимěçсен 14 танкне персе çěмěрнě е çунтарса янă тата 300 гитлеровеца çити пěтерсе тăкнă.

* * *

Краснодартан кăнтăртарахри районра вăйлă çапăçусем пыраççě, çав çапăçусен час-часах штыкпа çапăçнине те çитеççě. [illegible]

сем туса, наступлени тăвакан противника чарса тăраççě. Пěр чугунçул станцийě патěнчи çапăçусенче кăна нимěçсен 8 танк тата 900 салтакпа офицера çити пěтнě.

Прохладный районěнче совет войскисем гитлеровецсен темиçе атакине сирсе янă. Нимěç самолечěсем çинчен пирěн войскăсен тылне антарса хăварнă автоматчиксен десантне пěтерсе тăкнă.

* * *

Çурçĕр-Хěвеланăç фронтěнче вырăнти çапăçусем пулса пынă. Пирěн подразделенисем халăх пурăнакан пěр пункта йышăнса илнě. Артиллерирен персе тăнă хыççăн противник пехотăн икě батальонне çити вăйпа контратака тунă, вăл хăйěн çухатнă позицийěсене каялла туртса илесшěн пулнă. Гитлеровецсен контратакине сирсе янă. Тепěр участокра пирěн часть активлă çапăçусем туса пынă, противника хěссе, вăл хăйěн позицийěсене лайăхлатнă.

* * *

Ленинград облаçěнчи партизансен пěрлешнě темиçе отрячě нимěçсен карательнăй пысăк экспедицине хирěç çапăçнă. Çак юлашки кунсенче партизансем нимěçсен фашистла оккупанчěсене 1000 çынна çити вěлернě е амантнă, противникăн 9 танкне стройран кăларнă.

* * *

Нимěçсен 387-мěш пехотнăй дивизийěнчи 541-мěш полкăн 1-мěш ротинчен тыткăна лекнě ефрейтор Иоганн Швейцер çапла каласа панă: «Пěр уйăх хушшинчи çапăçусенче пěрремěш ротăра 140 çын вилнě е аманнă. Нимěç çарě питех те пысăк çухатусем тÿсет. Анчах та Германи командованийě ун çинчен нимěн те пěлтермест. Нумай салтаксем çапла калаççě: пирěн командовани вырăссене пěтěмпех çапса çěмěрнě тесе пěлтěрхи октябрьпе ноябрьтех мухтаннăччě. Çавăнтан вара пěр çула яхăн иртсе кайрě ěнтě. Анчах вырăссем халě те вăрçаççě-ха, вěсен войскăсем нумай. Çапла ěнтě, Германи командованийě суя пěлтерÿсем пичетлет, салтаксене улталать. Халě пире пěлтерех пулса урăх улталасшăн». [illegible]

* * *

[illegible]

Августăн 26-мěшěнчи ирхи пěлтерÿ

Августăн 26-мěш ыран тенě чух çěрле пирěн войскăсем противникпа хирěç **Клетская** районěнче, **Сталинградран** çурçĕр-хěвеланăçнерехре, **Котельниковăран** çурçĕр-хěвелтухăçнерехре, çавăн пекех тата **Прохладный** районěнче **Краснодартан** кăнтăртарахри вырăнта çапăçнă.

Фронтăн ытти участокěсенче нимěнле улшăну та пулман.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хěвеланăçнерехре пирěн войскăсем противникăн танкěсемпе пехотине хирěç вăйлăн çапăçнă. Н-ски часть противникăн темиçе атакине сирсе янă, нимěçсен 16 танкне тата 150 гитлеровеца пěтерсе тăкнă. [illegible]

* * *

Котельниковăран çурçĕр-хěвелтухăçнерехри районра пирěн войскăсем противникăн танкěсемпе мотопехотине хирěç çапăçнă. [illegible]

* * *

Краснодартан кăнтăртарахри районра пирěн войскăсем противникпа çапăçнă. [illegible]

Прохладный районěнче [illegible]

* * *

Воронежран çурçĕртерехри районра [illegible]

* * *

Нимěçсен 376-мěш пехотнăй дивизийěнчи [illegible]

* * *

Нимěçсен фашистла оккупанчěсем Орел облаçěнчи [illegible]

* * *

Бохум хули районěнчи (Германия) [illegible]

ПАРТИ ПУРНĂÇĚ

Агитаци ěçне лайăх туса пынă çěрте

Çěмěрле районěнчи колхозсенче халĕхи вăхăтра 107 агитатор ěçлет. Вěсем колхозниксене çěршывра пулса иртекен событисем çинчен, Совет Информаци пěлтерěвěсем çинчен каласа ăнлантараççě, социализмлă ăмăртăва сарса пыма пулăшаççě.

Агитаторсен витěмлě сăмахěсем колхозниксен ěçлес хастарлăхне çěклеççě. Хутарти Ленин ячěпе тăракан колхозра кашни бригада çумнех агитаторсемпе вулавçăсене çирěплетнě. Вěсем агитаци ěçне анлăн туса пыраççě: канмалли вăхăтра Совет Информаци Бюровěн пěлтерěвěсене вуласа параççě, кěске калаçусем туса ирттереççě. Кунсăр пуçне кашни бригадăрах икě-виçě кунра пěрре стена хаçачěсем кăларса тăраççě, кăтарту хăми çине малта пыракансен ячěсене çыраççě. Кунсăр пуçне бригадăсенче куçса çÿрекен Хěрлě ялавсем тунă.

Политикăллă-массăллă ěç пулăшнипе Ленин ячěпе тăракан колхоз уборкăра начар мар результатсем кăтартать. Вăл кěрхи тырăсене 6 кун хушшинче вырса пěтерчě. Уйрăм колхозниксем ěç нормисене икě хут ирттерсе тултарса пычěç. Çапла, сăмахран, Александра Мурза, Перасковья Васильева куллен 600—610 кěлте вырса нормăна 200 процент тултарса пычěç.

Колхоз ыраш вырса пěтерессе кěтмесěрех авăн çапма, кěрхи тырăсене акма тытăнчě. Паянхи кун ку ěçсем пысăк çěкленÿпе пулса пыраççě.

Молгачкинăри «Молодая сила» колхоза отечественнăй аслă вăрçă участникě коммунист Кириллов юлташ ертсе пырать. Вăл хăйěн витěмлě сăмахěсемпе колхозниксене тăрăшса ěçлеме хавхалантарать. Ку колхозра ытти агитаторсем те начар мар ěçлеççě. Колхоз счетоводě Н. Ефиторов уборка пуçланнăранпа 7 номер стена хаçачě кăларчě, кашни кунах хăйне çирěплетсе панă 1-мěш бригадăри колхозниксене хаçатсем вуласа парать. Антоновăпа Андрюшкин агитаторсем те тăтăшах калаçусем ирттереççě.

«Молодая сила» колхоз та уборкăра малта пыракан колхозсенчен пěри. Вăл çитес кунсенчех пěтěм тырпула вырса пěтерет. Халě колхозниксенчен пěр пайě авăн çапнă çěрте, теприсем кěраки тунă çěрте ěçлеççě. Вырнă тырра колхоз çийěнчех капана хывса пырать.

Агитациллě ěçе сарса пынă май, уборка ěçне ăнăçлăн туса пыракан колхозсене районра татах илсе кăтартма пулать. Анчах çав вăхăтрах юлса пыракан колхозсем те пур-ха. «Большевик», «Красный пахарь», «Ударник» колхозсем тырă вырас ěçе сÿрěккěн туса пыраççě, çавна пула авăн çапас, государствăна тырă парас тата кěлтесене капана хывас ěçсем юлса пыраççě. Çак колхозсенче уйрăм колхозниксем ěçе тухмасăр тăраççě. Çак фактсем ěнтě асăннă колхозсенче политикăллă-массăллă ěçе çителěксěр организациленине, социализмлă ăмăрту кирлě пек сарăлса пыманнине кăтартса параççě.

Ěçри çитменлěхсене кěске вăхăтрах пěтересси—пирěн задача. Эпир çакна малашне асра тытса, колхозниксем хушшинче политикăллă-массăллă ěçе анлăн сарса пыма тăрăшатпăр.

Д. ГУСЬКОВ,
ВКП(б) Çěмěрле райкомěн агитаципе пропаганда отделěн заведующийě.

Колхозри коммунистсен примерě

Партин «Коммунист» колхозри (Ишлей р.) пуçламăш организацийěнче (секретарě Федоров юлташ) ВКП(б) членěсем 3 тата ВКП(б) членěн кандидачěсем 1 çын. Парторганизацин йышě пысăк мар, çапах та вăл колхозри ялхуçалăх ěçěсене вăхăтра пурнăçласа пыма колхозниксемпе колхозницăсене мобилизацилес ěçе кирлě пек туса пырать.

Колхозăн кěрхи тата çурхи тырăсене пěтěмпе 235 гектар пухса кěртмелле, августăн 23-мěш тěлне 205 гектар çинчи тырра вырса пěтернě, 40 гектар çинчи тырра çапса тасатнă, 40 гектар çинчине капана хывнă. Уйхирте икě жнейкăпа тата 17 çавапа пěрмаях ěçлеççě. Государствăна обязательнăй поставка енěпе ыраш парса татнă. План тăрăх 70 тонна силос хывмалла пулсан, августăн 1-мěшне 82 тонна силос хывнă.

Хальхи вăхăтра колхозра икě молотилкăпа авăн çапаççě, пăрçа-ясмăксене пěтěмпех пухса кěртсе çапса хунă. Колхозăн кěрхи акара 121 гектар акса хăвармалла, августăн 23-мěш тěлне 115 гектар акнă.

Колхозри ăнăçлăх коммунистсем ěçре ытти колхозниксене пример кăтартса пынинчен килет. Парторганизацин секретарě Федоров юлташ колхоз председателě пулса тăрать. Вăл колхозшăн хытă тăрăшать. Коммунистка Евдокия Смирнова — доярка, кăçхине фермăра ěçлет, кăнтăрла тырă çулать, пěркун çурăра 0,66 гектар çинчи тырра çулнă. Коммунистсем нумайěшě машиноведсем пулса ěçлеççě, ěç нормисене ирттерсе тултараççě. Вěсем тăрăшса ěçленине кура ытти колхозниксемпе колхозницăсем те ялхуçалăх ěçěсене тимлěн туса пыраççě. Августăн 15-мěш тěлне ěçкунěсене минимум чухлě туман колхозниксем колхозра пěрре те çук. Колхозниксем хушшинче дисциплина çирěп. А. Батоевский нормăна 200 процент, Д. Алексеева — 105 процент, М. Иванова çěр процент ытла тултарса пыраççě. Çавăн пекех Ксения Толстова та авăн ěçлет.

Коммунистсем колхозри ěççыннисем хушшинче политикăллă ěçе кашни кунах туса пыраççě: хаçатсенчи çěнě хыпарсене вуласа кăтартаççě, стена хаçачěсем йěркеллě кăларса пыраççě.

Ф. ДМИТРИЕВ.

Августри плана 110 процент тултарнă

Чăвашпромсоюз системине кěрекен Шупашкарти «Кооператор» артель (председателě Чиганаев юлташ) июль уйăхěнче, производство планне ытлашшипех тултарса, республикăри промысла артелěсен ăмăртăвěнче малти вырăнсенчен пěрне йышăнчě. Артель август уйăхěнче те начар мар ěçлет: уйăхри плана вăл срокчен пěр эрне малтан тултарчě. Халě артель ěççыннисем валли куллен кирлě таварсене планран ирттерсе туса кăларать.

Плана кашни издели тăрăхах тултармалла,—çакăн пек задача лартнă хăйсен умне артельри рабочисемпе служащисем. Одеколон, гуталин, щеткăсем, спичкăсем тата ытти таварсем туса кăларас заданисене ăнăçлăн тултарнă. Ку уйăхра пурě 300 литр одеколон туса кăларнă. Çак ěçре пуринчен ытла Краличкина, Ивакина тата Рабинович работницăсем тухăçлă ěçленě.

Чугунçула юсавлă та культурăллă тытса тăратпăр

Çурхи шывшур хыççăн Канаш çывăхěнчи чугунçулăн 5-мěш дистанцийě начар пулнă. Поезда йěркеллě çÿреме чăрмантаракан çěмрěк вырăнсем кунта 17 çěрте пулнă.

Чугунçул çинче çул пахалăхне баллпа шутлаççě. Баллсем мěн таран сахал, çул çавăн чухлě лайăх. Çуркунне 5-мěш дистанцире çав баллсен хисепě вăтамран 236 пулнă, уйрăм сыпăксенче 600-ре те çитнě. Çапла вара кунти çула чылаях юсамалла пулнă.

Пěтěм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, дистанци коллективě хăйěн умне чи малтанах çав çěмрěксене юсас задачăна лартрě, дистанци кая юлса пынине пěтерме обязательство илчě.

Ăмăрту — пысăк вăй, вăл пире çав обязательствăна пурнăçлама пулăшрě. Августăн 2-мěш тěлне — железнодорожниксен Пěтěм Союзри кунě тěлне— коллектив дистанцие пěтěмпе пекех юсаса çитерчě. Поезда йěркеллě çÿреме чăрмантаракан лапам-тěпемлě вырăнсене 16 çěрте юсанă. Халě юсавсăр юлашки вырăна тăпра купаласа çирěплетеççě. Рельса хуçалăхне тÿрлетес тěлěшпе те нумай ěçсем тунă. Çул юрăхсăррине кăтартакан баллсен хисепě халě 236-ран 194 таран чакрě.

Çула юрăхлă туса çитерес тěлěшпе уйрăмах 3-мěш околоток (Энěшпуç разъезчě) мала тухрě. Кунта баллсен хисепě вăтăр ултттăна çити чакрě. Околоток коллективě, çулйěр мастерě медаленосец Михаил Дмитриев ертсе пынипе, юсав ěçěсен планне ытлашшипех тултарчě. Уйрăм стахановецсем хăйсен участокěсене питě лайăх пахалăхлă тура çитерчěç. Стахановец-бригадир Николаев юлташ хăйěн участокěнчи баллсене 16 çеç хăварчě, дистанцири рабочисем хушшинче малти вырăна тухрě. Стахановецсем: çулйěр бригадирě Арсентий Николаев, çул юсакан Иван Егоров, çула пăхса тăракансем Л. Кузьмин, Е. Федорова юлташсем ěç фронтěнчи отличниксен аттестачěсене илчěç. Околоток коллективě дистанцин куçса çÿрекен Хěрлě ялавне илчě.

Дистанцире социализмлă ăмăртура хăйсене палăртнă работниксем татах та пур. Иккěмěш околоткри (Кипеч разъезчě) çулйěр бригадирě Андрей Мальков пур пек çěмрěксене çийěнчех юсаса, çула яланах юсавлă тата культурăллă тытса тăрать. Унăн бригадин членěсем, çывăхри колхозсенчен нумай пулмасть пынă хěрсем, ěçе тěплěн тăваççě. Çавăн пекех тăваттăмěш околоткри (Вăрмар станцийě) çулйěре пăхса тăракансем Е. Ларионов, К. Тихонов юлташсем те хăйсене çирěплетсе панă километрсене яланах юсавлă тытса тăраççě. Вěсем пушă вăхăтра хăйсен çемйисемпе çул çине тухса ěçлеççě.

Дистанцин механически мастерскойěнче ěçлекенсем те лайăх тěслěхсем кăтартаççě. Слесарь-бригадир Казиков, электросварщик И. Павлов юлташсем темиçе профессие вěренсе çитрěç, кашни профессипех нормăна 200 процент ытла тултараççě. Унпа пěрлех Павлов юлташ пулас электросварщиксене ěçе вěрентет, Казиков юлташ ěç тухăçлăхне ÿстермелли майсем шырать. Вăл пуçарнипе мастерскойра механически мăлатук вырнаçтарнă. Çапла туни йывăр ěçе чылай çăмăллатнă, ěç тухăçлăхне ÿстернě.

3620-мěш номерлě моторлă дрезинăн шоферне Алексей Александрова, унăн помощникне комсомолка Валентина Глинская юлташа васкавлă задани панă. Вěсен питě хăвăрт тата хăйсен вăйěпе моторлă дрезинăна юсамалла пулнă. Çамрăк патриотсем 3 сехет хушши пěр канмасăр ěçлесе, дрезинăна срокран çур кун малтан юсаса кăларнă. Çавăншăн вěсене дистанци руководстви уйрăм приказ кăларса тав турě.

Дистанци коллективě хальхи йывăр вăхăта тивěçлě пек ěçлет, чугунçула юсавлă та тикěс тытса тăрассишěн кěрешет. Пирěн ěçсене партипе правительство тивěçлипе хакларěç: дистанци начальникне Андрей Иванович Светоозерский юлташа «За трудовое отличие» медаль парса наградăларěç. Ăна наградăланă ятпа пухăннă митингра дистанци коллективě хěле тěплěн хатěрленсе кěтсе илме сăмах пачě. Пирěн задача — панă сăмаха пурнăçа кěртесси.

П. ОСИПОВ,
5-мěш дистанци начальникěн заместителě.

Ют çěршывсенче

„Вăхăт васкаманнисене хирěç ěçлет"

АНГЛИ ХАÇАЧĚСЕМ ИККĚМĚШ ФРОНТ ÇИНЧЕН МĚН ÇЫРАÇÇĚ

ЛОНДОН, августăн 24-мěш. (ТАСС). «Рейнольдс ньюс» хаçат хăйěн вăрçă лару-тăрăвě çинчен çыракан корреспонденчěн статьине пичетленě. Çав корреспондент, Совет Союзě Германи хушшинчи фронтра лару-тăру çивěчленнине палăртса, çапла шанса çырать: «Германие хирěç икě фронтра вăрçас ыйту паянтан вара сÿтсе-явмалли ыйту пулма пăрахě, вăл тěплěн каласа панă задача пулса тăрě, çав задачăна вара пурнăçламалла çеç пулě».

Çав хаçатрах генерал Губерт Гоф çапла çырать: союзниксем Франци çыранě тăрăх 50 мильăна тăсăлакан çапăçу хирне нимěçсенчен йышлăрах вăйсене нимěçсенчен хăвăртрах пухса тăратма пултараççě, — тет. «Англичансем, уйрăмах та салтаксем, çапăçуран хăраççě-им вара? — тет Гоф. — Эпě ăна нихăçан та ěненес çук. Хăйěн примерěпе хавхалантаракан руководство çеç кирлě», тет. Гоф иккěмěш фронт тума пурри çинчен çырать. Вăл ěç, паллах ěнтě, пěтсе ларма та пултарать. «Анчах та ěç пěтсе ларма пултарассине пěле тăркачах çав пысăк ěçе тумасăр вăрçăра çěнтерме пулать-и вара?» — тет Гоф.

«Санди экспресс» хаçатăн сотрудникě Гарвин çапла çырать: «Ирěклěхе юратакан çěршывсем хăйсен пěрлехи противникне хирěç пыракан çапăçура мěнпур майсемпе усă курса тата тигěсле сывлăшра пуç пулса тăрса çапăçмасăр çěнтерме пултараймаççě. Росси пěтěм йывăрлăха хăй çинче тÿссе ирттернě вăхăтра союзниксемпěн Хěвеланăçěнче 1942 çулта пурнăç факторě — вăхăт пулса тăрать. Çак вăрçăра вăхăт васкаманнисене хирěç ěçлет», тет.

„Союзниксем анлăн наступлени тума пултараççě"

ДЬЕПП РАЙОННЕ ТАПĂННИ ÇИНЧЕН АМЕРИКĂРИ ХАÇАТСЕМ МĚН ÇЫРАÇÇĚ

НЬЮ-ЙОРК, августăн 24-мěш. (ТАСС). Америкăри хаçатсем Дьепп районне пырса тапăнни çинчен нумай çыраççě.

Юнайтед пресс агентствин политикăллă лару-тăру çинчен çыракан сотрудникě Кимл çапла çырать: Дьепп районне пырса тапăнни англичансене Европа континентне пырса кěме май пуррине кăтартрě.

Отставкăна тухнă адмирал Стирлинг çапла çырать: Дьепп районне пырса тапăнни пěрлешнě çěршывсем континент çине йышлăн пырса кěме пултарнине кăтартрě. 15.000 çынлă войскăсем Дьепп районне тапăнма пултарчěç пулсан, — тет Стирлинг, — вăл вара союзниксем пěр вăхăтрах Европа çыранне вуншар пунктра пырса кěме пултарнине пěлтерет. Çавăн пек пěр вăхăтрах вуншар тěлте пырса кěрсен, вěсенчен хăшě-пěри союзниксем валли çирěп базăсем туса хума май парěç, тет.

Францири патриотла вăрттăн организацисем хăйсене шеллемесěр ěçлени

НЬЮ-ЙОРК, августăн 25-мěш. (ТАСС). Америкăра тухакан «Лайф» журналра Францири патриотла вăрттăн организацисен руководителěсенчен пěрипе, Вашингтона пынăскерпе, калаçнине пичетленě. Çав руководитель хăйěн чăн ячě вырăнне Дюран ят йышăннă.

Дюран Францире вăрттăн ěçлекен хěçпăшаллă боецсен 4.000 çынлă ушкăнне тата вěсене кăмăллакан темиçе пин патриота ертсе пырать. Вăл тата вăрттăн хаçат кăларса тăрать, çав хаçат пěр вăхăтрах Францин 12 хулинче пěтěмпе 50.000 экземпляр тиражпа тухса тăрать.

Дюран çапла каласа панă: Францири тěрмесенче хальхи вăхăтра 400.000 французран кая мар ларать, вěсене гестапо тата Лаваль полицийě патриотла ěçсемшěн е заложниксен шучěпе тытса хупнă. Франци патриочěсен вăрттăн ěçлекен тěп организацийěнче хальхи вăхăтра хěçпăшаллă членсем сахалтан та 50.000 çын шутланаççě. Вěсене темиçе миллион çын кăмăллаççě, пулăшаççě. Вăрттăн тухакан хаçатсене сахалтан та 20 миллион француз вулать. Вăрттăн тухакан хаçат-журналсен пěр эрнери тиражě пěтěмпе 200.000 экземпляра çитет. Хăш чухне гестаповецсен вăрттăн ěçлекен типографисене тата вěсенче пичетленě хаçатсене тытса илме май килет. Анчах та çав тытса илнě номер тепěр икě виçě кунтан çěнěрен пичетленсе тухать. Вăрттăн тухакан пěр хаçат темиçе эрне хушши Парижри пысăк гостиницăн, пěтěмпех нимěçсем йышăнса илнěскерěн, çуртěнчи типографире пичетленсе тăнă.

Вăрттăн ěçлекен патриотла организацисем нумайěшě Германие хирěç ěçленисěр пуçне тата сутăнчăксен списокěсене çырса пичетлеççě. Çав списока чи малтан Пэтена, Лавале, Дарлана, Дориона, Денца, Деана, Пюшене тата ыттине те кěртнě. Саботажла ěçсем тата хěçпăшаллă партизанла операцисем тунисěр пуçне вăрттăн ěçлекен ушкăнсем тата «куçа курăнми» саботаж анлăн организацилеççě. Çапла, пěрре, нимěçсем Францирен Германие янă ялхуçалăх машинисен пайěсене Германие ярас вырăнне Испание янă. Çавна пула гитлеровецсем çав машинăсемпе нумайччен усă курма пултарайман.

Итали оккупанчěсен тискер ěçěсем

Рейтер агентстви пěлтернě тăрăх, Римра ěнер 15 словен салтакне асаплантарса вěлернě. Çав салтаксем Югославире итальянецсене хирěç партизансемпе пěрле кěрешнě пулнă. Ытти 7 партизана, 8 çултан çамрăкраххисене, каторгăна 30 çуллăха яма приговор йышăннă. 14 çултан пуçласа 50 çула çитнě 8.000 çынна концентрациллě лагерьсене янă. Çав çынсем вěсем пурте Словени столицинче пурăннă.

Англи авиацийě Франкфуртпа Висбаден çине вěçсе пырса тапăнни

ЛОНДОН, августăн 25-мěш. (ТАСС). Официальнăй йěркепе пěлтернě тăрăх, августăн 25-мěш ыран тенě чух çěрле Англи бомбардировщикěсен пысăк соединенийěсем Рейн облаçě çине вěçсе пырса тапăннă. Пуринчен ытла Франкфуртпа Висбаден хулисене тапăннă.

Англи истребителěсем çав çěр Голландипе Бельгири темиçе объекта атакăланă, нумай паровоза стройран кăларнă.

Çав çěрлехи операцисенчен каялла 16 бомбардировщик таврăнман.

Черчилль Англие таврăннă

ЛОНДОН, августăн 24-мěш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пěлтерет: Çывăхри Хěвелтухăçěнче тата Мускавра пулнă хыççăн Черчилль самолетпа Англие таврăннă.

ЛОНДОН, августăн 25-мěш. (ТАСС). Рейтер агентстви пěлтернě тăрăх, Черчилль Лондона августăн 24-мěшěнче таврăннă, вăл Мускавран таврăннă чухне тепěр хут Египета кайнă, унта вăл Каирта пулнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧУВАШСКИЙ СЕЛЬСКОХОЗЯЙСТВЕННЫЙ ИНСТИТУТ

объявляет, что продолжается прием заявлений для поступления в Институт на все курсы агрономического и зоотехнического факультетов.

Согласно приказа ВКВШ и Наркомзема СССР лица, оканчивающие зоотехнический факультет Института, получают наряду с квалификацией зоотехника и права ветеринарных работников.

Поступающие в Институт могут совмещать учебу с работой на производстве. Иногородние студенты, нуждающиеся в получении работы, обеспечиваются таковой.

ЦК ВКП(б) и СНК СССР разрешили для студентов ВУЗ'ов, совмещающих учебу с работой на производстве, 4—6 часовой рабочий день.

Заявления принимаются только с подлинниками аттестатов за курс средней школы.

Начало учебных занятий с 1 октября 1942 года. **ДИРЕКЦИЯ.**

РЕДАКЦИ АДРЕСĚ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 6, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакции секретарěн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайěн — 3—99, ялхуçалăх пайěн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1359 Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.